УТВЕРЖДАЮ
Проректор БУ ЧР ДПО
«Чувашский республиканский
институт образования»
Минобразования Чувашии
…………………..С.В. Петрова
«…..»……………………….2020 г.

**Государственная итоговая аттестация по образовательным программам среднего общего образования в форме единого республиканского экзамена**

**Спецификация**
контрольных измерительных материалов
для проведения в 2021 году
единого республиканского экзамена по чувашскому языку

Подготовлен кафедрой этнокультурного образования
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

**Чăваш чĕлхипе 2021 çулта тытмалли республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен спецификацийĕ**

**1. Республикăн пĕрлехи экзаменне ирттермелли тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен тĕп тĕллевĕ** – 11 класс пĕтерекен ачан чăваш чĕлхипе пухнă пĕлĕвне пĕтĕмĕшле аттестаци картинче хакласси.

**2. Тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен содержанине палăртакан документсем**

Чăваш шкулĕн 11-мĕш класне пĕтернĕ май чăваш чĕлхипе тытмалли экзамена ирттермелли йĕркене, экзамен материалне хатĕрлессипе çыхăннă ĕçсене Чăваш Республикин вĕренÿ тата çамрăксен политики министерстви кăтартса парать. Экзамен содержанийĕ министерство йышăннă документсенчи нормăпа килĕшсе тăрать.

**3. Республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен тытăмĕпе содержанийĕ**

Тĕрĕслевпе хаклав материалĕ 27 ĕçе пĕрлештерекен 2 пайран тăрать. Пĕрремĕш пай кĕскен хуравламалли 26 ĕçрен тăрать.

Кĕскен хуравламалли çакăн йышши ĕçсене палăртмалла:

– тĕрĕс хурава хăйсем тĕллĕн çырмалли ĕçсем;

– хуравсен варианчĕсенчен пĕр е темиçе хурав суйласа илсе çырмалли ĕçсем.

1-мĕш пайри ĕçсен хуравĕсене цифрăпа (числопа), сăмахпа (сăмахсемпе) е цифрăсен (числосен) йĕркипе запятойсемсĕр тата ытти символсемсĕр кăтартмалла. Хуравсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла, кайран хуравсен 1-мĕш бланкĕ çине куçармалла

Экзамен ĕçĕн 2-мĕш пайĕ вуланă текст çине таянса сочинени çырма пултарнине тĕрĕслекен ĕçрен тăрать.

**4. Ĕçсене экзамен ĕçĕн пайĕсене кура уйăрса тухни**

Ĕçсене экзамен ĕçĕн пайĕсене кура уйăрса тухнине 1-мĕш таблицăра кăтартнă.

*1-мĕш таблица*

*Ĕçсене экзамен ĕçĕн пайĕсене кура уйăрса тухни*

| Пай | Ĕç шучĕ | Пĕтĕм балл сумми | Миçе процент йышăнни | Ĕç тĕсĕ |
|---|---|---|---|---|
| 1-мĕш пай | 26 | 34 | 59 | Кĕскен хуравламалли ĕçсем |
| 2-мĕш пай | 1 | 24 | 41 | Тулли хуравламалли ĕç |
| Пĕтĕмпе | 27 | 58 | 100 | |

**5. Ĕç содержанийĕпе тĕсĕсем тăрăх ĕçене пайлани**

«Чăваш чĕлхи» предмет содержанийĕн тĕп пайĕсем тăрăх ĕçсене мĕнле пайланине 2-мĕш таблицăра кăтартнă.

*2-мĕш таблица*

*«Чăваш чĕлхи» предмет содержанийĕн тĕп пайĕсем тăрăх ĕçене пайлани*

| Пайсем | Ĕç шучĕ | Чи пысăк балл | Миçе процент йышăнни |
|---|---|---|---|
| Пуплев. Текст | 5 | 5 | 9 |
| Лексикăпа фразеологи | 2 | 2 | 3 |
| Пуплев. Орфографи нормисем | 7 | 7 | 12 |
| Пуплев. Пунктуаци нормисем | 6 | 7 | 12 |
| Пуплев. Чĕлхе нормисем | 5 | 9 | 16 |
| Пуплев. Чăваш чĕлхин илемĕ | 1 | 4 | 7 |
| Пуплеве аталантарни. Сочинени | 1 | 24 | 41 |
| Пĕтĕмпе | 27 | 58 | 100 |

Чĕлхе материалне мĕнле кăтартни тăрăх экзаменти ĕçсем расна (3-мĕш таблица). Экзамен тытакан ача уйрăм сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе е предложенисемпе кăтартнă чĕлхе материалĕпе, текстра панă чĕлхе пулăмĕсемпе ĕçлет, хăй çырса монологлă текст тăвать.

*3-мĕш таблица*

*Чĕлхе материалĕпе ĕçленин тĕсĕсем тăрăх ĕçсене пайлани*

| Ĕç тĕсĕ | Ĕç шучĕ | Чи пысăк балл | Миçе процент йышăнни |
|---|---|---|---|
| Уйрăм сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе е предложенисемпе кăтартнă ĕелхе материалĕпе ĕçлени | 17 (4-20) | 22 | 38 |
| Текстра панă чĕлхе пулăмĕсемпе ĕçлени | 9 (1-3, 21-26) | 12 | 21 |
| Çырса монологлă текст тăвасси | 1 (27) | 24 | 41 |
| Пĕтĕмпе | 27 | 58 | 100 |

**6. Республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕрĕслевпе хаклав материалĕн ĕçĕсене кăткăслăх тĕлĕшĕнчен пайлани.**

Ĕçсене кăткăслăх тĕлĕшĕнчен мĕнле пайланине 4-мĕш таблицăра кăтартнă.

Пĕрремĕш пайра пурте пĕлме тивĕçлĕ ĕçсем те, кăткăсраххисем те (25-26-мĕш ĕçсем) пур.

Иккĕмĕш пайри (27-мĕш ĕç – сочинени) ĕçе ача тĕрлĕ шайра тума пултарать.

*4-мĕш таблица*

*Ĕçене кăткăслăх тĕлĕшĕнчен пайлани*

| Ĕç кăткăслăхĕ | Ĕç шучĕ | Чи пысăк балл | Миçе процент йышăнни |
|---|---|---|---|
| Пурте пĕлме тивĕçлĕ ĕç | 24 | 29 | 50 |
| Кăткăсрах ĕç | 3 | 29 | 50 |
| Пĕтĕмпе | 27 | 58 | 100 |

**7. Чăваш чĕлхипе тытмалли экзамен вăхăчĕ**

Экзамен ĕçĕсене тума 3,5 сехет (210 минут) уйăрнă.

**8. Хушма материалсем тата оборудовани**

Экзаменра нимĕнле хушма материалпа та, оборудованипе те усă курма юрамасть.

**10. Экзамен ĕçĕсене хакламалли критерисем**

Пĕрремĕш пайри 1-7, 9-15, 17-25 ĕçсене тĕрĕс тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет. Хурав тĕрĕс пулмасан е вăл пачах пулмасан – 0 балл лартаççĕ.

8-мĕш ĕçе тунăшăн ача 0 балран пуçласа 5 балл таран илме пултарать: кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл лартмалла. **Хураври цифрăсен йĕрки пысăк пĕлтерĕшлĕ**. Цифрăсене йĕркипе тĕрĕс çырмалла.

16-мĕш ĕçе тунăшăн 0 балран пуçласа 2 балл таран лартма пултараççĕ. Тĕрĕс хураври пĕтĕм цифра пулсан тата урăх цифрăсем пĕрре те пулмасан – ĕçе 2 балл лартса хаклаççĕ. Тĕрĕс хураври пĕр цифра пулмасан е ун вырăнне урăх цифра пулсан – ĕçе 1 балл лартса хаклаççĕ. **Хураври цифрăсен йĕрки ниме те пĕлтермест**.

26-мĕш ĕçе тунăшăн 0 балран пуçласа 4 балл таран лартма юрать. Тĕрĕс хураври пĕтĕм цифра пулсан тата урăх цифрăсем пĕрре те пулмасан – 4 балл лартмалла. Тĕрĕс хураври кашни цифрăшăн ача 1 балл илет. **Хураври цифрăсен йĕрки пысăк пĕлтерĕшлĕ**.

2-мĕш пайăн ĕçне тĕрĕс тусан пĕтĕмпе 24 балл пухма май пур.

Вăтам вĕренĕвĕн вĕренӳ программисемпе патшалăхăн пĕтĕмлетӳ аттестацине ирттермелли йĕркепе (Раççей Çутĕç министерстви тата Рособрнадзор 2018 çулхи чӳкĕн 07-мĕшĕнче кăларнă 190/1512 №-лĕ приказ) килĕшӳллĕн

«82.<…>кашни ĕçе пĕр-пĕринпе канашламасăр икĕ эксперт тĕрĕслет. Енчен те вĕсем лартнă балсем хушшинче пысăк пĕлтерĕшлĕ уйрăмлăхсем пулсан ĕçе виççĕмĕш эксперт тепĕр хут пăхса тухса хак парать.<…>

Виççĕмĕш эксперта предмет комиссийĕн председателĕ экзамен ĕçне маларах тĕрĕслемен экспертсенчен палăртать.

Виççĕмĕш эксперта экзамен ĕçне маларах тĕрĕсленĕ экспертсем лартнă балсемпе паллаштараççĕ».

Пысăк пĕлтерĕшлĕ уйрăмлăхсем тесе çаксене шутламалла:

1. 27-мĕш ĕçе тунăшăн (пур 12 позиципе) пĕрремĕшпе иккĕмĕш эксперт хаклавĕсем 8 е ытларах балпа уйрăлса тăраççĕ. Кун пек чухне виççĕмĕш эксперт пĕрремĕшпе иккĕмĕш эксперт хаклавĕсем тӳр килмен позицисемпе кăна хаклать.

2. К7 критерипе пĕрремĕшпе иккĕмĕш эксперт хаклавĕсем 2 е ытларах балпа уйрăлса тăраççĕ. Кун пек чухне виççĕмĕш эксперт К7 позиципе кăна балл лартса парать.

3. К8 критерипе пĕрремĕшпе иккĕмĕш эксперт хаклавĕсем 2 е ытларах балпа уйрăлса тăраççĕ. Кун пек чухне виççĕмĕш эксперт К8 позиципе кăна балл лартса парать.

**10. 2020 çулхи тĕрĕслевпе хаклав материалне танлаштарсан 2021 çулта кĕртнĕ улшăнусем.**

2021 çулхи тĕрĕслевпе хаклав материалне 2020 çулхипе танлаштарсан улшăнусем кĕртмен.

*Хушса пани*

**11-мĕш класс пĕтерекенсем чăваш чĕлхипе тытмалли республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен вариантĕн пĕтĕмлетнĕ планĕ**

| | Экзамента тĕрĕслекен пĕлӳ содержанийĕн элеменчĕсем | Содержани элеменчĕсене тĕрĕсле-мелли кодсем | Пĕлӳ шайне кăтарта-кан кодсем | Кăткă слăхĕ | Чи пысăк балл |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. | Тĕрлĕ стильпе тата жанрпа çырнă текстсене информаци енчен тишкерни | 11 | 2.1<br>2.2<br>2.31 | П | 1 |
| 2. | Текстри предложенисен çыхăну мелĕсем. Темине, тĕллевне, адресатнетата хутшăну лару-тăрăвне кура текстра чĕлхе мелĕсене суйласа илни. | 4.3<br>5.10<br>5.14<br>8.2<br>8.4 | 1.4<br>2.1 | П | 1 |
| 3. | Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ | 2.1 | 1.1<br>1.4<br>2.1 | П | 1 |
| 4. | Орфоэпи нормисем (пусăм вырăнне пĕлни) | 9.1 | 1.1 | П | 1 |
| 5. | Лексика нормисем (сăмахпа лексика пĕлтерĕшне кура усă курни) | 9.2 | 1.1 | П | 1 |
| 6. | Лексика нормисем | 9.2 | 1.1 | П | 1 |
| 7. | Морфологи нормисем (сăмах формисене туни) | 9.3 | 1.1 | П | 1 |
| 8 | Синтаксис нормисем | 9.4 | 1.1 | П | 5 |
| 9. | Сăмах формисенче сасăсен кĕскелĕхĕпе вăрăмлăхне çырура палăртасси | 6.3 | 1.1 | П | 1 |
| 10. | Сасăсен çемçелĕхĕпе хытăлăхне çырура палăртасси | 6.2 | 1.1 | П | 1 |
| 11. | Сасăсен кĕскелĕхĕпе вăрăмлăхне çырура палăртасси | 6.3 | 1.1 | П | 1 |
| 12. | Тĕрлĕ пуплев пайĕсене | 6.5 | 1.1 | П | 1 |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | çырасси | | | | |
| 13. | Тĕрлĕ пуплев пайĕсене çырасси | 6.5 | 1.1 | П | 1 |
| 14. | Пайăр ятсене çырасси | 6.6. | 1.1 | П | 1 |
| 15. | Сăмахсене уйрăм, пĕрле тата дефиспа çырасси | 6.6 | 1.1 | П | 1 |
| 16. | Хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси | 7.6 | 1.1 | П | 2 |
| 17. | Пĕр йышши членлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси | 7.2 | 1.1 | П | 1 |
| 18. | Уйрăмлатнă членлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси | 7.3 | 1.1 | П | 1 |
| 19. | Кӳртĕм сăмахлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси | 7.4 | 1.1 | П | 1 |
| 20. | Çыхăну пллисĕр хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси | 7.5 | 1.1 | | |
| 21. | Пунктуаци тишкерĕвĕ | 7.7 | 1.1<br>3.3 | П | 1 |
| 22. | Текст – пуплев хайлавĕ. Текст тытăмĕ. | 8.1 | 2.1<br>2.2 | П | 1 |
| 23. | Пуплевĕн стиль уйрăмлăхĕсем | 8.3 | 1.1<br>1.4<br>2.1 | П | 1 |
| 24. | Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ. Синонимсем. Антонимсем. Омонимсем. Сăмах çаврăнăшĕсем. | 2.1<br>2.2<br>2.3<br>2.4<br>2.5 | 1.1<br>1.4<br>2.1 | П | 1 |
| 25. | Текстри предложенисен çыхăнăвĕн мелĕсем | 8.2 | 1.1<br>1.4 | К | 1 |
| 26. | Пуплев. Чĕлхен илемлĕх хатĕрĕсем | 10.5 | 1.1<br>1.2<br>1.3<br>2.1<br>2.2<br>2.3 | К | 4 |
| 2-мĕш пай | | | | | |
| 27. | Сочинени. Текста информаци енчен тишкерни. Пуплев лару-тăрăвне кура чĕлхе хатĕресемпе усă курни | 8.1<br>8.4<br>8.5<br>8.6<br>11 | 3.1<br>3.2<br>3.3<br>3.4 | К | 24 |

Пĕтĕмпе – 27 ĕç, вĕсенчен
Кĕскен хуравламалли ĕçсем – 26, туллин хуравламаллисем – 1;
Кăткăслăх енчен: П– 24, К – 3 .
Чи пысăк балл – 58.
Ĕçе тумалли вăхăт – 210 минут.